25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
6
ЭРНЕКУН
260 (6195) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Рабочисемпе хресченсем, совет интеллигенцийӗ! Тӑшман пирӗн ҫӗрсене тытса илме, пире нимӗҫ баронӗсен чурисем туса хума хапсӑнать. Хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва хӳтӗлесе хӑварар! Халӑхӑн мӗнпур вӑйне ылханлӑ тӑшмана ҫапса аркатнӑ ҫӗре хурар!

(Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци XXV ҫул тултарнӑ тӗле ЦК ВКП(б) кӑларнӑ лозунгсенчен)

Куриловски районри колхозниксен паха пуҫарӑвне анлӑн сарар

Саратов облаҫӗнчи Куриловски районри колхозниксемпе колхозницӑсем патриотизмла паха ӗҫ пуҫарчӗҫ. Молотов ячӗпе тата Революци ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗсен членӗсем: Федор Фролов, Карп Милантьев, Перасковья Вилкова колхозницӑсем хӑйсен ялӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене харпӑрхӑй хуҫалӑхӗнче туса илнӗ пахча-ҫимӗҫсемпе ҫӗрулмин пӗр пайне промышленность предприятийӗсенче ӗҫлекен рабочисем валли государство хакӗпе сутма сӗнӳ панӑ. Ҫак паха сӗнӗве колхозниксемпе колхозницӑсем хапӑл туса йышӑннӑ, икӗ кун хушшинче колхозниксем 600 пӑт ҫӗрулми пухса, ӑна хӗрлӗ обозпа завода леҫсе панӑ. Колхозниксен паха ӗҫне ырласа, завод картишӗнче митинг пулса иртнӗ. Рабочисемпе колхозниксем тӗлпулса тӑванла калаҫу пуҫарнӑ.

Молотов тата Революци ячӗпе хисепленекен ялхуҫалӑх артелӗсенчи колхозниксемпе колхозницӑсем рабочисене пысӑк пулӑшу панипех чарӑнса тӑман, вӗсем Саратов облаҫӗнчи мӗнпур колхозниксене хӑйсен хуҫалӑхӗсенче туса илнӗ пахча-ҫимӗҫсемпе ҫӗрулмин пӗр пайне рабочисене сутма чӗннӗ.

Хӑйсен ҫырӑвӗнче вӗсем ҫапла ҫырнӑ: «Фронта куллен кирлӗ продукцисене пурне те ҫителӗклӗ туса парасси-шӗн заводсемпе фабрикӑсенче ӗҫлекен рабочисем кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр, тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Фронта хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем ытларах туса парассишӗн вӗсем станоксем умӗнчен темиҫешер талӑк уйрӑлмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Кашни рабочи икӗ-виҫӗ ҫын тумалли ӗҫе пӗччен туса пырать, тепӗр чухне рабочи вунӑ ҫын тумалли ӗҫе пӗччен тӑвать, сменӑри ӗҫ нормине вунӑ хут ирттерсе тултарать. Мӗн чухлӗ пысӑк вӑй кирлӗ вӑл ӗҫе куллен тума! Пирӗн рабочисем—чӑн та геройсем!

Никам та мар, эпир, колхозник юлташсем, рабочисене яланах тутӑ тытас ыйтупа интересленмелле. Рабочисем тата вӗсен ҫемьисем валли пахча-ҫимӗҫсем, ҫӗрулми хатӗрлесе памалла. Хаклӑ юлташсем, пирӗн пек тӑвӑр; государство умӗнчи обязательствӑсене парса татнӑ хыҫҫӑн, хӑвӑрӑн кӑҫалхи тупӑшран пӗр пайне уйӑрса фронт заказӗсене тӑвакан заводсемпе фабрикӑсенче ӗҫлекен рабочисене леҫсе парӑр, хамӑртан ытлашши пахча-ҫимӗҫпе ҫӗрулмие рабочисем валли государство хакӗпе сутӑр, рабочисен ӗҫ укҫийӗпе спекулянтсемпе рвачсене усӑ курма ан парӑр», тесе ҫырнӑ колхозниксем хӑйсен чӗнӗвӗнче.

Молотов тата Революци ячӗпе тӑракан колхозсенчи колхозниксемпе колхозницӑсен патриотизмлӑ ӗҫӗ Саратов облаҫӗнчи колхозсенче кӑна мар, Совет Союзӗнчи ытти районсемпе облаҫсенче те анлӑн сарӑлса пырӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен кӑҫалхи тупӑшӗн пӗр пайне промышленность предприятисенчи рабочисем валли государство хакӗпе сутӗҫ. Колхозниксем государство хакӗпе сутма уйӑрнӑ апат-ҫимӗҫ продукчӗсем рабочисемпе служащисен пурнӑҫ условине лайӑхлатма пулӑшакан, хуласенчи ӗҫҫыннисене ялхуҫалӑх продукчӗсем парса тӑрас ӗҫе лайӑхлатакан вӑй пулса тӑрӗ.

Куриловски районри колхозсен патриотизмла пысӑк ӗҫне Чӑваш республикинчи колхозсем те хапӑл туса йышӑнаҫҫӗ. Шупашкар районӗнчи Иккасси ялсоветӗнчи «Майӑн 1-мӗшӗ» ялхуҫалӑх артелӗн членӗсем куриловецсен патриотла пуҫарӑвне пысӑк хавхаланупа сӳтсе-явса йышӑнчӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем пӗр заводӑн рабочийӗсене 200 пӑт ҫӗрулми, 91 пӑт купӑста, 14 пӑт сухан, темиҫешер пӑт кишӗр, хӗрлӗ кӑшман пухса государство хакӗпе сутнӑ. «Майӑн 1-мӗш» колхоз членӗсем Чӑваш республикинчи мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене хӑйсен примерне йышӑнса илме чӗнсе ҫыру ҫырчӗҫ. ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ вӗсен пуҫарӑвне ырларӗ. Саратов облаҫӗнчи Куриловски районри колхозниксен паха ӗҫне пирӗн республикӑри колхозниксем хушшинче те анлӑн сарма май пуррине палӑртрӗ.

Калинински районри «Правда» колхоз членӗсем рабочисене сутма 10 центнер ҫӗрулми уйӑрса пачӗҫ. Шупашкар районӗнче ку ӗҫе нумай колхозниксем пысӑк кӑмӑлпа туса пыраҫҫӗ. Шӑмӑш ялсоветӗнчи Водопьянов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем рабочисене сутма пӗр тонна ҫӗрулми, 2 центнер кишӗр, «Большая Волга» колхоз членӗсем 5 пӑт сухан, «Труд» колхоз членӗсем 3 центнер купӑста, 3 центнер ҫӗрулми пухнӑ. «Память Ленина» ялхуҫалӑх артелӗн членӗсем рабочисене сутма купӑста нумай пухаҫҫӗ.

ВКП(б) райкомӗсен тата МТС политотделӗсен Саратов облаҫӗнчи Куриловски районри колхозниксен паха пуҫарӑвӗ ҫинчен колхозниксемпе колхозницӑсене анлӑн ӑнлантарса памалла, фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисене сутма ялхуҫалӑх продукчӗсемпе пахча-ҫимӗҫсем пухса хӗрлӗ обозсем организацилемелле.

Совет Союзӗн геройла рабочи класӗ отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче паха ӗҫсем туса пырать. Пирӗн промышленноҫӑн пиншер предприятийӗсем производство планне тултараҫҫӗ ҫеҫ мар, нумай чухне ирттерсе пурнӑҫласа пыраҫҫӗ, фронтпа тӑван ҫӗршыва валли нумайрах та нумайрах продукци туса кӑлараҫҫӗ. Рабочисен хӗрӳ ӗҫӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсен геройла кӗрешӗвӗпе пӗр утӑмпа пырать. Ҫавӑнпа та рабочисене пулӑшас енӗпе пуҫланнӑ кашни пуҫарулла ӗҫ халӗ питӗ хаклӑ, ӑна анлӑн сарса пымалла.

Вӑрҫӑ пынӑ уйӑхсенче промышленность предприятийӗсенчи рабочисен ретне пиншер колхозник тӑнӑ. Хуласенчи ӗҫҫыннисем кӑҫал колхозсен уйхирӗсене тухса колхозниксемпе колхозницӑсене тырпулсене пухса кӗртме пулӑшрӗҫ. Тӑван ҫӗршывӑн вӑйӗ куллен ӳссе ҫирӗпленсе пырать. Вӑл вӑй рабочисемпе колхозниксем алла-аллӑн тытӑнса ӗҫлининче, рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенчӗсем ҫирӗп пӗрлӗхлӗ пулнинче. Куриловски районри колхозниксен паха ӗҫӗ ҫак пӗрлӗхе кӑтартса паракан, ӑна ҫирӗплетсе пыма пулӑшакан тӗслӗх. Вӗсен паха пуҫарӑвӗ Чӑваш республикинчи колхозниксем хушшинче те тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнмалла.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Кӑкӑр ҫине ҫакмалли „Санитари службин отличникӗ" знака ҫирӗплетесси ҫинчен

Хӗрлӗ Ҫарӑн санитари службинчи рядовой тата кӗҫӗн начальство составӗнчи уйрӑмӑнах палӑрнӑ ҫынсене хавхалантарас шутпа, СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ **ҫапла йышӑнать:**

1. Хӗрлӗ Ҫарӑн рядовой тата кӗҫӗн начальство составне валли кӑкӑр ҫине ҫакмалли «Санитари службин отличникӗ» знакӑн образецне ҫирӗплетес.
2. Кӑкӑр ҫине ҫакмалли «Санитари службин отличникӗ» знак ҫинчен калакан положение ҫирӗплетес.
3. Знака сылтӑм кӑкӑр ҫинче ҫакса ҫӳремелле тӑвас.
4. Кӑкӑр ҫине ҫакмалли ҫак знакпа наградӑлама фронтсен санитарнӑй управленийӗсен начальникӗсене, армисен санитарнӑй отделӗсен начальникӗсене тата Хӗрлӗ Ҫарӑн главнӑй санитарнӑй управленийӗн начальникне право парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти ноябрӗн 4-мӗшӗ.

ПӖЛТЕРӲ

НОЯБРӖН 6-МӖШӖНЧЕ, КАҪХИНЕ 8 СЕХЕТРЕ, СОВЕТСЕН ҪУРТӖНЧИ ЛАРУСЕН ЗАЛӖНЧЕ ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛӐ АСЛӐ РЕВОЛЮЦИ 25 ҪУЛ ТУЛТАРНӐ ЯТПА ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ПАРТИПЕ СОВЕТ ТАТА ОБЩЕСТВӐЛЛӐ ОРГАНИЗАЦИСЕН, ҪАР ЧАСӖСЕН ЧАПЛА ЛАРӐВӖ ПУЛАТЬ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧӖ,
ХУЛА СОВЕЧӖН ИСПОЛКОМӖ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Ноябрӗн 4-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 4-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Ноябрӗн 3-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен войскӑсем тата грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине пӗтернӗ, артиллерин 6 батарейине тата зенитнӑй пулеметсен 10 точкине пусарнӑ, пӗр чугунҫул составне ҫӗмӗрнӗ, противник пехотин пӗр ротине ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем хаяр ҫапӑҫусем туса пынӑ. Противникӑн пехоти танксем пулӑшса пынипе хула оборонин пур участокӗсенче те атакӑлама хӑтланнӑ. Пирӗн войскӑсем нимӗҫсен атакисене сирсе янӑ, противника пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Противникӑн 1000 ытла салтакӗсемпе офицерӗсене вӗлерсе пӗтернӗ, 8 танкне, 10 автомашинине персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, икӗ орудине, миномётсен темиҫе батарейине, 34 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ.

Пирӗн войскӑсен подразделенийӗсенче Октябрьти социализмлӑ Аслӑ Революци 25 ҫул тултарни ҫинчен калаҫусем пулса иртеҫҫӗ. Боецсемпе командирсем пӗр кӑмӑллӑ пулса Тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫлама, Сталинграда вӗҫне ҫитиех паттӑррӑн сыхлама сӑмах параҫҫӗ. Сталинград урамӗсенче 110 нимӗҫе вӗлерсе пӗтернӗ снайпер Зайцев юлташ ҫапла каланӑ: «Атӑлӑн сулахай енчи ҫыранӗ ҫине кайма пирӗн ҫул ҫук. Эпир фашистсене пӗр хӗрхенӳсӗр пӗтеретпӗр. Каялла мар, малалла ҫеҫ кайӑпӑр».

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре противникӑн пысӑках мар ушкӑнӗсемпе ҫапӑҫусем пулса пынӑ. Н-ски чаҫӑн разведка тӑвакан отрячӗ тӑшман тылӗнче ҫапӑҫса нимӗҫсен 60 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 3 орудине персе ҫӗмӗрнӗ тата боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ. Участоксенчен пӗринче пирӗн боецсем нимӗҫсен 5 блиндажне тата ҫӗр ӑшне алтса лартнӑ танкне туртса илнӗ. Артиллеристсем тӑшманӑн 9 ДЗОТ-не ишӗлтерсе антарнӑ, пӗр орудине персе ҫӗмӗрнӗ тата 70 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Пирӗн авиаци нимӗҫсен 5 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуҫне ҫӗр ҫинчи войскӑсем пенипе противникӑн икӗ самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем противникӑн пехотипе тата танкӗсемпе оборонӑллӑ вӑйлӑ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Участоксенчен пӗринче Н-ски чаҫӑн боецӗсем тӑшман атакисене сире-сире ярса, 350 гитлеровеца вӗлернӗ тата нимӗҫсен 7 танкне ҫунтарса янӑ. Тепӗр участокра противник йышлӑрах пулнӑ пулин те пирӗн танкистсем гитлеровецсене хирӗҫ ҫапӑҫӑва кӗрсе кайнӑ. Кун вӗҫленнӗ тӗле вӗсем нимӗҫсен 15 танкне ҫунтарса янӑ, 17 танкне персе ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре совет войскисем активлӑ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем тӑшманӑн опорнӑй пункчӗсене туртса илнӗ тата нимӗҫсен 400 ҫити салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Мазепов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири боец-бронебойщиксен ушкӑнӗ нимӗҫсен самолетне персе ӳкернӗ. Рота командирӗ Дубровский юлташ 2 кун хушшинче пулеметран персе противникӑн икӗ самолетне ӳкернӗ.

* * *

Новороссийскран хӗвелтухӑҫнерехре разведчиксен отрячӗ тӑшманӑн тылне кӗрсе кайса нимӗҫсен чаҫӗн штабӗ ҫине тапӑннӑ. Пуҫланса кайнӑ ҫапӑҫура 27 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ. Противникӑн рота командирне тата батальон командирне вӗлернӗ.

* * *

Ҫурҫӗр Кавказӑн тӑшман оккупациленӗ районӗсенче ҫапӑҫакан партизансем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене пысӑк сиен кӳреҫҫӗ. Партизансен темиҫе отрячӗ юлашки вӑхӑтра нимӗҫсен 400 ҫити салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Партизансем нимӗҫсенчен хӗҫпӑшал тата боеприпассем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсем Чернигов хулинчи хӗрлӗ халӑха 200 ҫынна, нимӗҫсен каторгине кайма килӗшменскерсене, концентрациллӗ лагере хупнӑ. Лагере хупнисен хушшинче хӗрарӑмсемпе подростоксем нумай пулнӑ. Выҫлӑх пирки лагерьте тиф сарӑлса кайнӑ. Тифпа чирленӗ 27 ҫынна фашистла бандитсем персе вӗлернӗ.

* * *

Нимӗҫсен Бельгири оккупациллӗ влаҫӗсем Бельги рабочийӗсене Германи промышленноҫӗнче ӗҫлеме вӑйпа ирӗксӗрлесе мобилизацилеме тытӑннӑ. Рабочисем гитлеровецсен ҫак хӑтланӑвне хирӗҫ вӑйлӑн тӑраҫҫӗ. Узешски округри горняксемпе металлургсем забастовка пуҫласа янӑ. Рабочисене темӗнле майпа та хӗстерсе хӑратаҫҫӗ, анчах та вӗсем ӑна пӑхмаҫҫӗ, ку таранччен ӗҫе тухмаҫҫӗ. Вӗсем фашистла Германие ӗҫлеме каймастпӑр тесе татӑклӑнах хирӗҫ тӑнӑ.

Ноябрӗн 5-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 5-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн чаҫсем противникӑн пур атакисене те сире-сире пӑрахнӑ. Заводсенчен пӗрине хӳтӗлекен Н-ски гвардейски соединени гитлеровецсен темиҫе группине, пирӗн войскӑсен тылне кӗрсе кайма хӑтланнӑскерсене, ҫапса аркатнӑ. Хула оборонин кӑнтӑрти участокӗнче совет боецӗсем нимӗҫсен 140 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, противникӑн 10 пулеметне, 3 минометне тата артиллерин батарейине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Н-ски чаҫӑн разведка тӑвакан отрячӗ противник вырнаҫса тӑнӑ ҫӗре кӗрсе кайнӑ та, унта нимӗҫсен икӗ дзотне сирпӗнтерсе янӑ. Разведчиксем 30 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, 3 пулемет тата миномет тытса илсе хӑйсен чаҫне ӑнӑҫлӑн таврӑннӑ. Пирӗн артиллеристсем противникӑн фронт еннелле ҫывхарса пыракан автоколонни ҫине пенӗ. Снарядсем тиенӗ 5 автомашинӑна тата горючи 2 автоцистернине ҫапса аркатнӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем тӑшмана хирӗҫ хӗрӳллӗн ҫапӑҫнӑ. Противникӑн атакӑна тухма хатӗрленнӗ танкӗсемпе пехотин ушкӑнне пирӗн артиллери персе сапаласа янӑ. Гитлеровецсем пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Совет летчикӗсем сывлӑшри ҫапӑҫусенче кӗрешсе тата зенитнӑй артиллерирен персе нимӗҫсен 13 самолетне ӳкернӗ.

* * *

Моздок районӗнче нимӗҫсем пирӗн позицисене атакӑлама хӑтланнӑ, анчах вӗсен 150 салтакӗ тата 7 офицерӗ вилсе пӗтсен, нимӗҫсем каялла чакнӑ. Пирӗн подразделенисем, контратакӑна куҫса, противникӑн тӗреклетнӗ пӗр пунктне йышӑнса илнӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем противникӑн ҫавӑрса илнӗ ушкӑнӗсене пӗтерсе тӑкассишӗн малалла ҫапӑҫнӑ. Н-ски часть нимӗҫсен 270 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Тыткӑна илнӗ нимӗҫ салтакӗсем нимӗҫ войскисем ҫавтери пысӑк ҫухатусем тӳсни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Нимӗҫсен горно-стрелковӑй дивизийӗн 13-мӗш полкӗнчен тыткӑна лекнӗ салтак Ферстер 13-мӗш полкӑн юлашки кунсенче пӗтӗм личнӑй составӗнчен 50 проценчӗ пӗтни ҫинчен пӗлтернӗ. Нимӗҫсен 1-мӗш горно-стрелковӑй полкӗнчи салтак Вилли Тиль—вӗсен ротинче икӗ кун хушшинче 80 салтак вилнӗ тата аманнӑ, тесе каласа панӑ.

* * *

Минск партизанӗсен отрячӗ гитлеровецсен карательнӑй отрядне ҫапса аркатнӑ. Совет патриочӗсем нимӗҫсен майорне—отрядӑн командирне, икӗ капитана, старши лейтенанта тата 12 салтака вӗлернӗ. Нимӗҫсен тепӗр 12 салтакне тыткӑна илнӗ. Партизансен тепӗр отрячӗ октябрӗн 10-мӗшӗпе 25-мӗшӗ хушшинче нимӗҫсен фашистла оккупан-

Вӗсӗ 2-мӗш страницӑра.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

Фронтпа ҫӗршыв валли пир-авӑр

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV ҫул тултарнине тивӗҫлипе кӗтсе илессишӗн кӗрешсе, Шупашкарти пир-авӑр фабрики (заведующийӗ Сметанников юлташ) иртнӗ уйӑхри производство программине ытлашшипех тултарчӗ. Фабрика коллективӗ октябрьте ӗҫҫыннисемпе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли сентябрьтинчен нумайрах пир-авӑр тӗртсе пачӗ. Ҫак ӗҫре уйрӑмах стахановка-работницӑсем паха тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. Стахановка-ткачиха Казанкова юлташ иртнӗ уйӑхри нормӑна 139 процент тултарчӗ. Корнеева, Пираскова, Раскказова тата Куликова работницӑсем те нормӑран чылай тухӑҫлӑрах ӗҫлерӗҫ.

Фабрикӑри рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем чӗртавара, топливӑна тата электроэнергие перекетлессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Нумай пулмасть пулса иртнӗ производствӑллӑ канашлура ҫак енӗпе тумалли ӗҫсене татӑклӑн палӑртса хӑварнӑ. Фабрика коллективӗн задачи — ҫав ӗҫсене вӑхӑтра тата пӗтӗмӗшпех пурнӑҫа кӗртесси пулать.

Ҫӗнӗ ӗҫри ӑстаҫӑсем

СЕНТЕРВАРРИ, ноябрӗн 5-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Хальхи вӑхӑтра судоверфь коллективӗ ҫӗнӗ йышши продукци туса кӑларма вӗренес тӗлӗшпе ӗҫлет. Чылай стахановецсем ҫак ӗҫре ӑсталӑхпа пултарулӑх кӑтартаҫҫӗ. Столярсем Беловпа Воинов юлташсем, йывӑр пайсене тӑваҫҫӗ пулин те, нормӑна 135 процент тултараҫҫӗ. Хӑма ҫуракан цехри работниксем Питинпа Грязнов юлташсем хӑйсене панӑ ҫӗнӗ заданисене 2 хута яхӑн ирттерсе тултараҫҫӗ. Краличкинпа Кроликов тимӗрҫӗсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те вӗсенчен кая мар.

Шиляков ертсе пыракан бригадӑра халӗ ҫеҫ колхозсенчен пынӑ ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ. Октябрь уявне тухӑҫлӑ ӗҫленипе палӑртас тесе вӗсем йывӑҫ йӑтса куҫарас нормӑна куллен 145 процент тултараҫҫӗ.

П. ЖИЛОЧКИН,
Судоверфь директорӗ.

Уяв тӗлне тунӑ ҫитӗнӳ

ИЕПРЕҪ, ноябрӗн 5-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Леспромхоз коллективӗ аслӑ уява вӑрман ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне касас енӗпе 147,8 процент, турттарас енӗпе 113 процент тултарнипе кӗтсе илет.

Леспромхозӑн пысӑк ӗҫӗсенчен пӗри вӑл—чугунҫул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлесси. Октябрь уявне кӗтсе илме хатӗрленнӗ май, леспромхоз коллективӗ ку тӗлӗшпе те паха ҫитӗнӳ турӗ. Ҫак ҫулӑн иккӗмӗш ҫурринчи задание вӑл хатӗрлес енӗпе 1?9 процент, турттарас енӗпе 88 процент тултарчӗ. Иепреҫпе Шупашкар районӗсем хӑйсене панӑ заданисене октябрь уйӑхӗнчех вӗҫлерӗҫ. Ҫапла вара вӗсем уяв ячӗпе илнӗ хӑйсен обязательствине срокчен тата ытлашшипех пурнӑҫа кӗртрӗҫ.

Уяв умӗнхи ӑмӑртура стахановецсен йышӗ вӑрманта ӗҫлекенсенчен 90 процент чухлӗ шутланать. Стахановец Г. Ефремов юлташ хӑйӗн ҫурҫулти заданине 200 процент, В. Чураков юлташ—170 процент тултарчӗҫ. Ф. Михайлов, С. Иванов, В. Ефремов тата И. Румянцев юлташсем те ултӑ уйӑхри задание срокчен вӗҫлерӗҫ.

Н. БЕЛЬСКИЙ,
Леспромхозри парторганизацин секретарӗ

ӐМӐРТУРА МАЛА ТУХНИСЕМ

КАНАШ. Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура вагонсем юсакан заводра Соколовский юлташӑн цехӗ, вагонсем тӑвакан цех тата Чесов юлташӑн бригади мала тухнӑ.

Соколовский юлташӑн цехӗнчи рабочисемпе работницӑсем уяв умӗнхи кунсенче пурте пекех нормӑна ирттерсе ӗҫленӗ. Токарь Я. Тимофеев юлташ нормӑна куллен 3 хут ирттерсе тултарса пынӑ. Ҫавӑн пекех станочница В. Крупская, сварщица Д. Капранова тата токарь Т. Литвинов юлташсем те хӑйсен заданийӗсене 200—250 процент тултарнӑ.

Нумаях пулмасть заводри чи лайӑх рабочисене, инженерсемпе техниксене Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗн наградисене — «Хисеплӗ железнодорожнике» тата «Сталинла призывӑн ударникне» ятлӑ значоксем пачӗҫ. Унсӑр пуҫне тата заводӑн 33 работникне, производство планне ӑнӑҫлӑн тултарса ӗҫленӗшӗн, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ.

Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗн тата Чӑваш АССР правительствин хисепне тивӗҫлӗ пулни завод коллективне татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарчӗ. Уяв умӗнхи кунсенче чылай рабочисем пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартаҫҫӗ. Сталинла вахтӑна тӑнӑ ҫамрӑксем В. Гринь, Шарлай, Щукина, Корякина юлташсем хӑйсен нормисене кашни сменӑрах 200—300 процент тултараҫҫӗ. Куллен 3 норма—ҫакӑн пек Токарев юлташ цехӗнчи Канюка, Ямбеков тата Ефремова токарьсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ. Йывӑҫсем кассакакан цехри Петрушина, Никитюк комсомолкӑсем те вӗсенчен кая ӗҫлемеҫҫӗ.

Паян ӗнерхинчен, ыран паянхинчен тухӑҫлӑрах ӗҫлемелле—ҫакӑн пек заводри ӑмӑртура малта пыракансен ӗмӗчӗ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли—ӑшӑ тумтирсем

КАЛИНИНО. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарчӗ. Ҫак аслӑ уява районри ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине вӑйлатнипе кӗтсе илеҫҫӗ. Турп. Карачурари «Ленин ҫулӗпе» колхозра ик-виҫ кун хушшинчех Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли пӗр кӗрӗк пиншак, 20 тир, 10 килограмм ҫӑм, 2 мӑшӑр алшиш, 3 мулаххай, 3 минтер пичӗ, пӗр простыня тата ытти япаласем пухнӑ. В. Быков юлташ ҫак ӗҫ валли пӗр кӗрӗк пиншак, В. Власов — 2 тир, 300 грамм ҫӑм, В. Денисов — пӗр тир, ҫур килограмм ҫӑм панӑ.

Боецсем валли ӑшӑ тумтирсем хатӗрлеме Чулкаҫри «Смычка» колхоз членӗсем 25 тир, 25 килограмм ҫӑм, 16 алшӑлли, 2 мӑшӑр носки, 2 мӑшӑр алшиш пухса панӑ. Мӑн Хирлепри «Строитель» колхозра та ку ӗҫ ӑнӑҫлӑн пулса пырать.

Анчах Ҫӗньялти «Правда», Шнакассинчи «Броневик», Тушкассинчи «Труд» колхозсенче ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫ ҫаплипех сӳрӗккӗн пулса пырать-ха.

К. ТИМОФЕЕВ.

Комсомолецсен паха ӗҫӗсем

КАЛИНИНО. Районри комсомолецсем колхозсенчи обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленнӗ ҫӗрте ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ.

Эльменти Пушкин ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем ҫак кунсенче выльӑх-чӗрлӗхсен витисене йӑлтах юсаса ӑшӑтрӗҫ, 150 тонна силос хыврӗҫ.

Хӑмӑшри Папанин ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем те колхозниксемпе пӗрле 32 ӗне вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ вите туса пӗтерчӗҫ.

Районра конюхсем, скотниксем, ферма заведующийӗсем пулса 41 комсомолец ӗҫлет.

Б. ШОРНИКОВ.

ПУРТЕ МИТИНГА!

НОЯБРӖН 7-МӖШӖНЧЕ 11 СЕХЕТРЕ ИРХИНЕ ХӖРЛӖ ПЛОЩАДЬРЕ ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛӐ АСЛӐ РЕВОЛЮЦИ XXV ҪУЛ ТУЛТАРНӐ ЯТПА ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ӖҪҪЫННИСЕН МИТИНГӖ ПУЛАТЬ.

МИТИНГА УЧРЕЖДЕНИСЕМПЕ ПРЕДПРИЯТИСЕМ ТӐРАХ ПУХАНАҪҪӖ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

чĕсен войскисемпе техникине турттарса пыракан икĕ эшелона ўпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизансемех, тăшманăн гарнизонне тапăнса, нимĕçсен 105 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, миномет, икĕ пулемет тата 35 винтовка тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Орел облаçĕнчи Салтановка ялне нимĕн юлмиччен ишĕлтерсе, çунтарса пĕтернĕ. Вутра колхозниксен 450 килĕ, шкул, больница, таварлă сĕт-çу ферми тата ытти обществăллă çурт-йĕрсем пĕтнĕ. Нимĕçсем ялти вуншар çынсене асаплантарса тата персе вĕлернĕ. 19 çулхи колхозницăна Анна Матюшкинăна гитлерла ирсĕрсем ирĕксĕрлесе пусмăрланă та, унтан унăн кăкрисене, хăлхисене касса илнĕ, вара персе пăрахнă. Вырăнти больницăри врача Александра Алексеевна Малиновскаяна нимĕç вăрă-хурахĕсем чĕрĕллех çунтарса янă.

* * *

Варшава çывăхĕнче чугунçул çинче пысăк катастрофа пулнă. Нимĕçсен боеприпассем тиенĕ эшелонĕ Польша патриочĕсем хурса хăварнă минăсем çине пырса кĕрсе сывлăшалла сирпĕнсе кайнă. Нимĕçсен поезд çинче ларса пынă 50 салтакĕ ытла вилнĕ тата аманнă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Тăхăр миллиард кĕнеке

Пĕтĕм Союзри кĕнеке палати пĕлтернĕ тăрăх, Совет влаçĕ 25 çул хушшинче 9 миллиард тĕрлĕрен кĕнекене брошюра кăларнă. 25 çул хушшинче çулсерен кĕнеке кăларасси 8 хут ўснĕ, хаçат кăларасси 14 хут ўснĕ.

Совет Союзĕнче кĕнекесене 100 ытла чĕлхепе кăлараççĕ, вăл шутра чылай халăхсен хăйсен чĕлхипе революциччен нимĕнле кĕнеке те, хаçат-журнал та пичетлемен, вĕсен хăйсен чĕлхипе нимĕнле çырулăх та пулман.

Маркс, Энгельс, Ленин тата Сталин произведенийĕсене 727 миллион экземпляр пичетлесе кăларнă. Сталин кĕнекисене Совет Союзĕнче 100 чĕлхепе кăларнă, вĕсен пĕтĕм тиражĕ — 420 миллион экземпляр.

Вăрçă пуçлансан çулталăк хушшинче 150 миллиона çити кĕнеке пичетлесе кăларнă. Оборона Халăх Комиссарĕн И. В. Сталинăн сăмахĕсем, доклачĕсем тата приказĕсем 39 миллионлă тиражпа пичетленсе тухнă. (ТАСС).

Инçетри Таймыртра

Таймыр ĕççыннийĕсем чĕрĕк ĕмĕр хушшинче питех те чаплă çитĕнўсем турĕç. Тахçан пушхирлĕ край пулнă Таймыр чечекленекен çĕршыв пулса тăчĕ.

Революциччен округра пĕр шкул та пулман. Халĕ кунта 22 шкул. Больницăсемпе ветеринари пункчĕсем, лекторисем нумай уçнă. Кинопередвижкăсемпе сасăллă киносем ĕçлеççĕ. Пулă хуçалăхĕ çулран-çул сарăлса пырать, кайăксен паха тирĕсемпе çăмĕсене хатĕрлесси ўсет.

Округри ĕççыннисем фронта ĕçлĕн пулăшаççĕ. Вĕсем боецсемпе командирсем валли ăшă япаласем нумай янă, оборона фондне укçан тата государство заемĕсен облигацийĕсене 12 миллион тенкĕлĕх хывнă. (ТАСС).

Пирĕн земляксем

Танкист-подполковник И. П. Петров

Унăн кăкăрне Хĕрлĕ Ялав орденĕ илемлетет. Вăл финсен белогвардейщинине хирĕç пынă çапăçусен участникĕ пулнă, хальхи отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешет.

Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсенчен пĕринче 1941 çулта çакăн пек çырнăччĕ:

«Капитан-орденоносецăн Петров юлташăн танковăй подразделенийĕ Н. пунктĕнчен çурçĕр енче противникăн танкĕсене тата мотопехотине атакăланă. Çапăçу 7 сехет пынă. Çак çапăçура Петров капитанăн танковăй подразделенийĕ противникăнне пĕтĕмпе 40 танк çĕмĕрсе тăкнă. Совет танкĕсен гусеницисемпе нимĕçсен противотанковăй темиçе орудине таптаса лапчăтнă».

Капитан И. П. Петров юлташ хăйĕн танковăй подразделенийĕпе фронтри çапăçусенче çитĕнў хыççăн çитĕнў туса пынă. Вăл темиçе вуншар противникăн танкĕсене тата орудисене, гитлеровецсене лучăркаса тăкнă. Унăн подразделенинчи танксем тăшманшăн хăрушă вăй пулса тăнă.

Çапăçура çитĕнўсем туса капитан И. Петров подполковнике çити ўсрĕ. Малтан ăна майор званине, каярахпа подполковник званине панă тата правительство наградине пама тăратнă.

И. П. Петров юлташ Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхозран. 1931 çулта Хĕрлĕ Çара кайнă. Служба срокĕ тухсан вăл унтах сверхсрочно ĕçлеме юлнă.

Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен паттăр землякĕпе И. Петров юлташпа тивĕçлипе мухтанаççĕ.

Ирех пуçласа каçчен сухалаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтри пек ĕçлемелли эрне пуçланнăранпа районри колхозсенче кĕрхи çĕрме тăвас ĕç палăрмаллах вăйланчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кĕрхи çĕртме сухине Октябрь уявĕччен туса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Ноябрĕн 3-мĕшĕнче районри колхозсем пурĕ 335 гектар сухаларĕç, ĕçре 770 лаша пулчĕ. Паянхи куна район кĕрхи çĕртмене 6.504 гектар çинче туса, плана 67,4 процент тултарчĕ.

Малта пыракан колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарса халĕ хура çĕртме тума тытăнчĕç. «Двигатель революции» колхоз кĕрхи çĕртмене 470 гектар вырăнне 497 гектар туса хăварчĕ. «Икинче», «Коммунар» колхозсем кĕрхи çĕртме планне ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Нумай колхозсенче сухаçсене ирирех ĕçе тухса тĕттĕм пуличченех уйра ĕçлеме лайăх услови тунă: вĕри апат пĕçерсе параççĕ, лашасене те уйрах тăрантараççĕ, кашни сухаçăна уйрăм участок çирĕплетсе панă. Çавна пула сухаçсем ĕç тухăçлăхне вăйлăн ўстерчĕç. Сăмахран, халиччен ĕçре юлса пынă «Юнга Турмыш» колхозра халĕ кашни суха тăвакан колхозник талăкра пĕр гектартан кая мар сухалать. Çавăн пекех «Икинче», «Новая жизнь» колхозсенче те сухаçсем талăкри ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ.

И. ГЕОРГИЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Малта пыракан колхозсемпе танлашмалла

ЕТĔРНЕ, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Стрелецки ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса кĕрхи çĕртме сухине октябрĕн 30-мĕшĕччен туса пĕтерме обязательство илнĕ. Сухара кашни колхозник пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçленине пула колхоз октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме тумалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕ, планран ирттерсе 120 гектар сухаларĕ. Çапла, кĕрхи çĕртмене кăçал колхоз пурĕ 450 гектар çинче туса, Октябрь уявĕ умĕн илнĕ социализмлă обязательствăна кăтартуллăн пурнăçларĕ.

Кĕрхи çĕртме сухине туса пĕтерессишĕн фронтри пек ĕçлемелли эрнене хутшăнса, Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кĕрхи çĕртме сухине малалла туса пыраççĕ. Ноябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртмене колхоз татах 20 гектар çинче тунă. Халиччен сухара 20—25 лаша ĕçленĕ пулсан, халь 28 лаша ĕçлет. Сухаçсем икшер лашапа 14 плугпа ĕçлеççĕ. Ĕç нормине кулленех ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ. Фронтри пек ĕçлемелли эрнене хутшăнса колхоз хăйĕн умне кăçал кĕрхи çĕртме сухине пурĕ 500 гектара çити туса хăварма задача лартнă.

Районри 14 колхоз ноябрĕн 3-мĕшĕнче кĕрхи çĕртме тумалли плана ирттерсе пурнăçланă. Анчах та хăшпĕр колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре халĕ те кирлĕ улшăнусем туман-ха. Уйрăмах «Чăваш ЦИК», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Красноармеец» колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре юлса пыраççĕ. Ку колхозсене ВКП(б) райкомĕпе райисполком енчен те çителĕклĕ пулăшу паман.

Лашасемпе туллин усă кураççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Фронтри пек ĕçлемелли эрнен 4-мĕш кунĕ тĕлне район кĕрхи çĕртме тумалли плана 77,6 процент тултарчĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан, «Майăн 1-мĕшĕ», «Волга», Ленин ячĕпе тăракан, «Комбинат» колхозсем ĕнер кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕç, паян вĕсем кĕрхи çĕртмене планран ирттерсе тăваççĕ. Кăмаша ялсоветĕнчи колхозсем те кĕрхи çĕртме сухине паян-ыранах туса пĕтереççĕ.

Анчах та кĕрхи çĕрте тумалли плана Октябрь уявĕччен вĕçлес пулсан, районри колхозсен куллен пысăк вăй пухса ĕçлеме кирлĕ. Çакна халь хăшпĕр колхозсенче пачах курма çук-ха. «Красный Атмал», «Красная звезда», «Будь готов», «Борец» колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана 30—40 процент çеç тултарнă. Ку колхозсенче лашасем çителĕклĕ пулсан та вĕсене сухана кўлмен, сухаçсем ĕçе кăнтăрла тĕлне çеç тухаççĕ, ĕç тухăçлăхĕ питех те пĕчĕккĕ. «Красная звезда» колхозра ноябрĕн 1-мĕшĕнче 6 лашапа пĕр гектар çеç сухаланă. Районри çĕрĕç пайĕ ку колхозсене конкретлă пулăшу пани çук.

Танксен „Колхозник Чувашии" колоннине тума

ПЕРВОМАЙСКОЕ, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухнă çĕре учительсемпе вĕренекенсем те активлăн хутшăнаççĕ. Аслă Чементи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем çак ĕç валли кĕске вăхăтрах 500 тенкĕ укçа пухнă. Учительсем танксен колоннине тума уйăхри ĕç укçин 10 процентне панă. Вĕренекенсенчен ку ĕçе уйрăмах А. Алешьевпа Т. Етриванова активлăн хутшăнаççĕ.

Танксен колоннине тума укçа пухас ĕç вăйлансах пырать.

И. МИТРОФАНОВ.

* * *

ИЕПРЕÇ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухас ĕçе районри колхозсем активлăн хутшăнаççĕ. Ноябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне государство банкне çак ĕç валли пурĕ 25.600 тенкĕ укçа хывнă. «Правда» колхоз членĕсем танксен колоннине тума 8.000 тенкĕ, «Коминтерн» колхоз—5.000 тенкĕ пухнă.

Танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухас ĕçе хутшăнасси — кашни колхозникăн хисеплĕ тивĕçĕ, теççĕ «Коминтерн» колхоз членĕсем. Вĕсем пĕри те çак ĕçе хутшăнмасăр юлман. Унта танксен колоннине тума 50 тенкĕрен кая укçа панă колхозниксем пачах çук.

Д. МИХАЙЛОВ.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă ятпа Америкăри политикăллă тата обществăллă деятельсем Совет Союзне саламлаҫҫĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри «Совьет раша тудэй» ятлă журналăн специальнăй номерĕ тухнă. Унта ССР Союзĕнче Октябрьти социализмлă Аслă революци пулни 25 çул тултарнă ятпа Америкăри обществăллă тата политикăллă деятельсем Совет Союзне янă саламсене пичетленĕ.

США ПРЕЗИДЕНЧĔН АРĂМĔ ЭЛЕОНОРА РУЗВЕЛЬТ

Вырăссен паттăр çарĕсем çĕнтерессине тата мĕнпур пĕрлешнĕ çĕршывсен вăйĕсем хăйсен пĕтĕмĕшлĕ тăшманĕсене юлашкинчен çапах та çапса аркатассине пĕтĕм чун-чĕререн шанса, тĕлĕнсе те хĕпĕртесе, пурте вырăссем хăйсен çĕршывне геройла хўтĕленине сăнаса тăраççĕ.

ÇАР ПРОИЗВОДСТВИ ЕНĔПЕ ĔÇЛЕКЕН УПРАВЛЕНИН РУКОВОДИТЕЛĔ НЕЛЬСОН

Вырăс халăхĕ нацистла агрессорсене хирĕç чаплăн кĕрешнишĕн эпĕ вырăс халăхне тивĕçлипе мухтама хама телейлĕ тесе шутлатăп. Пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç пыракан çак кĕрешўре вырăс халăхĕ тўссе ирттернĕ жертвăсем тата унăн чăтăмлăхĕпе çирĕплĕхĕ мĕнпур американецсене хавхалантарма тивĕçлĕ.

СЕНАТОР-ДЕМОКРАТ МЭРДОК (УАТ ШТАЧĔ)

Вырăс халăхĕ гитлерла нацизмăн варварла тата тираниллĕ агрессине хирĕç чаплăн кĕрешни пек этем хăвачĕ ирĕклĕхшĕн кĕрешнин аслă примерне мĕнпур истори тăршшĕнче те тупма çук. Вырăс халăхĕн хăвачĕ, Америка хăвачĕ пекех, никам çĕнтерейми вăйлă. Çакă икĕ аслă çĕршыв умĕнче тĕксĕм кунсем нумай тăраççĕ-ха, анчах вĕсен çулпуçĕсем юлашкинчен çапах та мирлĕ конференцире пулса мĕнпур тĕнчешĕн мирлĕ Договор туса хурĕç. Эпĕ пĕлетĕп: çав договора тусан этемĕн тивлечĕ, унăн пурнăçĕ, унăн çурт-йĕрĕ, çемьи традицийĕсем, институчĕсем, харпăр-хăйне юрăхлă государство йĕркине суйласа илмелли правăсем вăрçăллă агрессирен яланлăхах хўтĕленсе юлассине вырăссемпе Америка халăхĕсем шанса тăраççĕ. Малашлăхра хавхалантарма пултаракан примерсене çынсем иртнĕ кунçулра шыранă чухне вырăс çарĕсене Сталинград патĕнче хавхалантаракан вăй-хăват яланлăхах ирĕклĕхĕн малта тăракан тĕрекĕ пулса юлĕ.

ЖУРНАЛИСТКА ДОРОТИ ТОМПСОН

Ытти халăхсем çĕнтернипе кăна эпир çĕнтерў тума пултараймастпăр. Пĕрле тăрса кĕрешни кăна пĕтĕмĕшлĕ çĕнтерў патне илсе çитерме пултарать. Берлина тўрех пырса çапас шутпа хĕвеланăçĕнче татăклă наступлени пуçласа яма условисем пулса çитмен-ха е тата вăхăт çитмен-ха тесе шутлаççĕ хăшĕпĕрисем. Анчах Гитлер пĕлет: вырăссен çарĕсем хăйсен территорийĕ çинче чакса пычĕç пулин те Германи çарĕсене капшатса халсăрлатса пычĕç. Гитлерăн хăйĕн войскисемпе вăйĕсене ирĕксĕрех сапалама лекни, хăйĕн материалсемпе çынсем тĕлĕшĕнчи ресурсĕсене расходласа пĕтерни çав татăклă çĕнтерĕве çывхартать. Сывă пултăр Совет Союзĕ! Сывă пулччăр Россия халăхĕсем!

Исмет Иненю Турцин национальнăй пухăвĕн сессине уçнă чухне каланă сăмах

АНКАРА, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Национальнăй пухăвăн сессине уçнă чухне Турци республикин президенчĕ Исмет Иненю сăмах тухса каланă. Национальнăй пуху хăйĕн ларăвне «фронтсем каçакан çĕршывсене юнлă вăрçă малалла ишĕлтерсе пушатса пынă условисенче» туса ирттерет, тесе кăтартса панă Исмет Иненю. «Çакăн пек лару-тăрăва,—тенĕ президент,—эпир тарăнăн хурланса сăнаса тăратпăр». «Кашни халăхшăн, пĕчĕккисемпе пысăккисемшĕн те, тивлетлĕн те никама пăхăнмасăр пурăнмалли май пулма тивĕçлине» палăртса, Исмет Иненю çапла каланă: «Мĕнпур çĕр чăмăрне çавăрса илнĕ хальхи вăрçă пынă май çакна ăнланса илни çинчен калама пулать пек: пĕр енĕ кăна пуçпулса тăрасси çине тайăнакан система сыхланса юлма та пултараймасть, ăна, çав системăна, туса хума та май çук».

«Эпир,—тенĕ Иненю,—договорсем тăрăх илнĕ хамăрăн обязательствăсене шанчăклăн пăхăнса тăрса, хамăрăн союзлă тата туслă çыхăнусене тытса пырса, кирек мĕнле государство тĕлĕшпе те, кирек мĕнле вăрттăн ĕç тăвассинчен тата куç хыçĕнчи шухăшсем тытассинчен тимлĕн пăрăнса пырса, хамăрăн нацишĕн хăрушсăрлăх кўрекен политикăна малалла та çирĕп тытса пырăпăр».

Исмет Иненю çакна кăтартса панă: Турци правительстви нейтралитет политикине тытса пыни йывăрлăхсемпе çыхăннă пулин те, Турция çав нейтралитет политикине малашне те çине тăрсах пурнăçа кĕртес ĕçре пĕрре те иккĕленсе тăмĕ.

Исмет Иненю национальнăй пухăва çак факт çине уйрăмах çавăрăнса пăхма сĕннĕ: «Вăрçă пуçланнăранпа Турция тĕнчери вăрçă патне паянхи пек нихăçан та çывăх тăман», тенĕ вăл.

Шалти политика ыйтăвĕсем çине куçса, Исмет Иненю чугунçулсем тăвас тĕлĕшпе, çавăн пекех тата ирригаци тĕлĕшпе Турци правительстви тунă ĕçсене палăртнă. Исмет Иненю ялхуçалăх ыйтăвĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине, правительство ялхуçалăх продукчĕсен хакĕсене ўстерес тĕлĕшпе тунă ĕç паха вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă.

ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: ноябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер кăнтăрла 8-мĕш арми çĕнĕрен малалла куçнă. Çурçĕрте, тинĕс хĕрринчи участоксăр пуçне, противника Сиди-Абд-Эль-Рахманран хĕвеланăçнелле сирсе ывăтнă. Фронтăн кăнтăр участокĕнче те противника унăн Дейр-Эль-Ангар-Манасиб тата Эль-Химаймат патĕнчи позицийĕсенчен хĕссе кăларнă. Ку позицисене Англи войскисем йышăнса илнĕ. Юлашки 24 сехет хушшинче союзниксен пĕтĕм ударнăй войскисем противникăн тинĕс хĕрринчи çулпа чакса пыракан чаçĕсемпе çапăçнă.

Англи самолечĕсем противникăн вăрахăн куçса пыракан транспортнăй колоннисене татти-сыпписĕр тапăнса тăнă. Тата унсăр пуçне Англи самолечĕсем çапăçусем пыракан пĕтĕм районĕпех противникăн боевой машинисем çине бомбăсем пăрахса тăнă.

* * *

Сиди-Абд-Эль—Рахман тинĕс хĕррипе пыракан чугунçул çинче, Эль-Аламейнран 13 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вырнаçса тăрать, Эль-Дабаран та унта çитиччен çавăн чухлех пулать. Дейр-Эль-Ангар-Манасиб Рувей-Сат ятлă тусенчен тата Эль-Химайматран 10—12 километра яхăн кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пулать.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇА

МЕЛЬБУРН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче кĕрешекен вăйĕсен пĕрлешўллĕ командованийĕн штабĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Оуэн-Стэнли секторĕнче союзниксен войскисем каялла чакакан японецсене çаплах хĕссе пыраççĕ. Союзниксен малти чаçĕсем хальхи вăхăтра Оиви патне çывхарса пыраççĕ. Союзниксен авиацийĕ Япони карапĕсене Куна районĕнче атакăланă. Бомбăсем пăрахнипе японецсен пĕр крейсерне путарнă, тепĕр крейсерне сиенленĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен тинĕс министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: ноябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле японецсем, Гвадалканар утравĕн çурçĕр енчи çыранĕ çине хăйсен войскисем патне подкрепленисем антарса хăварнă. Подкрепленисем анса юлнă вырăн Америка войскисен позицийĕсенчен хĕвелтухăçнерех выртать.

Октябрь тивлечĕшĕн

Виçĕ çул хушши салтак службинче сĕтĕрĕнсе çўресе те хăй камшăн çапăçнине ăнланса илмен вăл. Патша йыттисем хăваланă пирки тупă йĕтрисем айĕн пуçне пĕксе утнă. Кама вĕлернĕ— вăл ун çинчен шухăшламан. Тăван çемьене курма хăвăртрах таврăнас килни çеç пуçĕнчен тухма пĕлмен.

Унччен те пулман Порфирьев юлташ Аслă Октябрь йыхравне илтнĕ:

— Степка!.. Çавăр пăшал кĕпçине патша тронĕ еннелле...

Çак йыхрав, чи малтанах, унăн ăстăнĕнче улшăну тунă. Степан малашне камшăн çапăçмаллине ăнланса илнĕ. Вăл хăй ертсе пыракан взвода çапла приказ панă:

— Çĕнĕ тĕнчешĕн, пусмăрçăсене хирĕç — малалла!

Çапăçусем кăштах лăплансан, çав кунхине вăл хăйĕн «Блок-ночĕ» çине çапла çырса хунă: «Паянхи итог: 16 офицер—шăтăкра, пусмăрçăсен 5 именййĕ — вутра. Пĕтĕм взвод — Совет влаçĕшĕн».

— Халĕ ĕнтĕ хамăр ирĕклĕхшĕн, хамăрăн малашнехи кунçулшăн çапăçма тытăнтăмăр,— ăнлантарнă вăл взводри салтаксене. — Социализмлă тăван çĕршыв — хăрушлăхра. Ăна пирĕн сыхласа хăвармалла. Çавăнпа тăшмана çĕнтериччен киле таврăнасси çинчен шутлама пăрахмалла...

Степан, унпа пĕрле юлташĕсем те, интервентсене хирĕç хаяррăн кĕрешме тытăннă.

Интервентсене Совет çĕрĕ çинчен тасатса, Аслă Октябрь панă тивлетсене сыхласа хăварнă хыççăн, Степан Порфирьев хăйĕн тăван ялне — Вăрнар районĕнчи Çĕн Алтăша таврăннă та учитель пулса ĕçлеме пуçланă. Ачасем ăна юратнă, хисепленĕ. Хăй те вăл вĕсене юратнă. Ачасен пĕлĕвĕпе пултарулăхне ўстерессишĕн ырми-канми ĕçленĕ. Унăн вĕренекенĕсем часах паллă çынсем — инженерсем, техниксем, искусство работникĕсем пулса тăнă. Чăвашсен писателĕсем И. Ивник, А. Федоров, М. Кибек, техник-инженерсем А. Орлов, Н. Трофимов, орденоносецсем П. Крючков, В. Христофоров, С. Тимофеев ун патĕнче вĕренсе тухнă. Вăл хăйĕн мĕнпур пĕлĕвне, пултарулăхне ачасене вĕрентес ĕçе пăхăнтарнă.

1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕ Степан Порфирьев пурнăçĕн историне тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă фашистла ирсĕрсене хирĕç çапăçма тухса кайнă кун пулса кĕнĕ. Ăна, вĕренекенсен çыру ĕçĕсене тĕрĕслесе ларакан скерне, шăп кăнтăрла тĕлĕнче повестка пырса панă.

— Ну, тепре куриччен! — тенĕ Степан Порфирьевич. — Октябрьте çĕнтернĕ, халĕ те çĕнтермесĕр таврăнмăпăр.

Вăл хăйĕн тăван çемьипе, ял-йышсемпе, вĕренекен ачасемпе сывпуллашнă та фронта тухса кайнă.

Фронта çитсенех ăна лейтенант званине панă.

Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн, Совет влаçĕшĕн, Октябрьте çĕнсе илнĕ çĕнтерўсемшĕн вăл ротăри боецсене çапăçăва ертсе кĕнĕ.

Пĕррехинче наступлени çурçĕр çитеспе пуçланнă. Р. ялĕн хўттинчен вĕçĕмсĕр персе тăракан фашистсене ăнсăртран пырса пĕтерсе тăкас тесе, лейтенант Степан Порфирьев хăйĕн ротине вăрман хĕррипе ертсе пынă. Инçех мар — çирĕм-вăтăр метр сарлакăш юханшыв. Унтан лерехре — тăшман дзочĕ. Степан Порфирьев хăйĕн ротине шыв урлă каçма приказ панă. Чи малтан хăй шыва сиксе унта сасăсăр ишме пуçланă. Тăшман разведки çакна сиснĕ. Фашистсем шыв çинелле хăвăрттăн гранатăсем ывăтма тытăннă. Анчах Порфирьев сухалса кайман. Вăл хăяхсем хĕррипе чупса, фашистла разведчиксен хыçне тухнă, тăвата фрица стройран кăларнă. Рота умĕнче фашистла мерзавецсен ирсĕр кĕлеткисем выртнă. Вĕсем тин çеç пирĕн хресченсене çаратса çўренĕ пулнă. Кашнин кăсйинчех тата кутамкисенче хĕрарăм кĕписем, пĕчĕк ачасене чĕркемелли одеялăсем пулнă.

— Таврăмалла! — чĕннĕ лейтенант Порфирьев.

Вĕсем фашистсем вырнаçнă ял патне çывхарнă. Лейтенант Степан Порфирьев ротăна виçĕ пая уйăрнă та тăшмана çавăрса илме хушнă. Умма пысăк хăрушлăх тухса тăнă. Çав хăрушлăха кашни боец курса тăнă. Çак пункта нимĕçсенчен тасатсан, Хĕрлĕ Çар чаçĕсене валли пысăк çул уçăлассăи çинчен те боецсем пĕлнĕ. Тепĕр темиçе минутăран тăшман хыçĕнче пулеметсем шатăртатма пуçланă. Гранатăсем çурăлнă. Фрицсем пăтрашнă. Виçĕ сехет хушши ним тĕлсĕр персе тăнă. Унтан Порфирьев юлташ дзот патнех шуса пынă та ура çине çĕкленнĕ. Халĕ ĕнтĕ унăн кĕлетки тăшмана та лайăхах курăннă. Лейтенант çапла хăтланпинчен боецсем тĕлĕннĕ.

— Не стреляйте... Рус сдается! — илтĕннĕ сасă. Фашистсен дзочĕ патне чĕрĕ юлнă юлашки çирĕм-çирĕм пилĕк фрицĕ пуçтарăннă, та «парăнакан» большевика йышăнма хатĕрленсе тăнă. Пирĕн боецсем пулемета дзот еннелле вырнаçтарса лартнине асăрхасан, лейтенант Порфирьев пĕтĕм пĕвĕпе малалла туртăнса аллинчи гранатăсен çыххине дзот çине ыткăнтарнă. «Нет! Русский не сдавался, русский и вперед будет отстоять!»—янăранă лейтенантăн уçă та витĕмлĕ сасси.

Çапла çĕнсе илнĕ тăшман рубежне.

— Тăшман чее. Пирĕн унран чеерех пулмалла, — тенĕ вăл.

Граждăн вăрçин участникĕ, аслă Октябрьшĕн çапăçнă С. Порфирьев юлташа тăшман тылĕнче те çапăçма тĕл килнĕ. 1942 çулти май уйăхĕнче С. Порфирьев ертсе пыракан отряд фашистсем оккупациленĕ районсенчен пĕринче пулнă. Шĕлкĕшлĕ, шыв-шурлă, сивĕ çанталăксенче отряд вăрманти шурлăхсенче çўренĕ, фашистсен эшелонĕсем çине пыра-пыра тапăннă, танксен колоннисене пĕтере-пĕтере тăкнă. Çапла, пĕррехинче, унăн отрячĕн шурлăх варринче икĕ эрне хушши фашистсен умкинче пулса вилĕме хирĕç куçа кĕретĕн тăма тивнĕ. Анчах опытлă командир кунта та çĕнтернĕ. Вăл икĕ хутчен штык вĕççĕн тăшманăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç çапăçăва кĕнĕ, 19 гитлеровеца штыкпа чиксе вĕлернĕ, нимĕç оккупанчĕсем темĕн чухлĕ хытă тăнă пулин те, вăл командованин заданине пурнăçланă.

Оккупантсем Ворошилов ячĕпе хисепленекен колхозри 11 ватă старике пĕр çĕре пухнă та, ывăлĕсем фронтра нимĕçсене хирĕç çапăçнăшăн, кĕлете питĕрсе лартса вут тĕртнĕ. Гитлерла вăрă-хурахсем «11 лет Октября» колхозăн библиотекине йăлтах тустарнă, унта хĕрсенчен мăшкăлламалли ирсĕр çурт туса хунă. Тăшман тылĕнче çапăçнă чухне фашистсен çак ирсĕр ĕçĕсене Порфирьев хăй куçĕпе курнă. Килне янă çырура вăл çапла çырать: «Савнă ывăлăм! Фашистсен тылĕнчи тискер ĕçсем çинчен аса илсен, чĕре тăвăнса килет. Советăн айăпсăр çыннисене çавнашкал асап тўстернĕшĕн тăшмана хаяррăн таврăтпăр. Эпĕ сывă тата ĕлĕкхинчен те чĕрĕрех. Ман ăшра утмăл патне çывхаракан чĕре мар, çирĕм пилĕк çулхи командир чĕри тапать. Ан иккĕленĕр: çĕнтерў пирĕнте пулать. Эп таврăнăп-ха».

С. Порфирьев халĕ Хĕвеланăç фронтĕнчи чи ответлă участокра. Вăл ним ывăнмасăр кĕрешет. Ăна правительство наградине пама тăратнă. Октябрьти революци 25 çул тултарнине вăл каллех тупă йĕтрисем айĕнче кĕтсе илет.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 973 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.